
СВОЯ
игра
kachayfree.ru

# Тема: «Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишши пурнăçĕпе пултарулăхĕ»

(8-9 класс ачисем валли)

# I раунд

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Константин Иванов пурнăçĕ | 10 | 20 | 30 | 40 | 50 |
| Çеçпĕл Мишши пурнăçĕ | 10 | 20 | 30 | 40 | 50 |
| К.Иванов пултарулăхĕ | 10 | 20 | 30 | 40 | 50 |
| Çеçпĕл Мишши пултарулăхĕ | 10 | 20 | 30 | 40 | 50 |
| „Нарспи” поэма содержанийĕ” | 10 | 20 | 30 | 40 | 50 |

## 10

- Пăртта йăхĕнчен тухнă К. Иванов ăçта тата хăçан çуралнă?

## 20

- К.Иванов 1903 çулта ăçта вĕренме кĕрет?

## 30

- К.Иванова Чӗмпӗр чăваш шкулӗнчен миçемӗш çулта кăларса яраççӗ?

# 40 «Михĕри кушак»



- Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕ çумĕнчи хĕр ачасен шкулĕнче К.В.Иванов кам пулса ĕçлет?

## 50

- Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче К. Ивановпа пĕрле паллă чăваш хĕрарăм çыравçисенчен кам вĕреннĕ?

# 10

- Çеçпĕл Мишши ăçта тата хăçан çуралнă?

## 20

- Çeçпĕл Мишшин чăн-чăн ячĕ, ашшĕ ячĕ, хушамачĕ.

## 30

- Çеçпĕл Мишши шкул пĕтернĕ хыççăн ăçта, мĕнле ĕçре ĕçлет?

# 40

Çеçпĕл Мишши хăш хулари учительсем хатĕрлекен семинаринче вĕренет?

# 50

- 1920 çулта Çеçпĕл Мишшине мĕншĕн арестленĕ?

# 10 Телейлĕ самант!!!



# 20

- „Нарспи" поэма пĕрремĕш хут мĕн ятлă кĕнекере тата миçĕмĕш çулта пичетленнĕ?

# 30

- 1910 çулхи çулла тăван ялĕнче К.В.Иванов чăваш сăмахлăхĕн мĕнле тĕслĕхĕсене пухнă?

## 40

- К.Иванов 1912 çулта чăваш ачисем валли мĕнле кĕнеке хатĕрлес ĕçе хутшăннă?

# 50

- Халăх сăмахлăхĕнчи сюжетсене тĕпе хурса К. Иванов мĕнле хайлавсем çырнă?

# 10

- Шăхасанти учительсем хатĕрлекен икĕ сыпăклă шкулта вĕреннĕ чухне алăпа çырса мĕн ятлă журнал кăларнă?

# 20 Телейсĕр самант!!!



## 30

- Çeçпĕл Мишшин кун курнă пĕрремĕш сăвви  мĕн ятлă?

## 40

- Мĕншĕн Çеçпĕл Мишши художник пулас ĕмĕтне пурнăçлайман?

# 50

- Çеçпĕл Мишши мĕн ятлă статья çырать?

# 10 «Михёри кушак»



- Поэмăри ĕçсем хăш ялсенче пулса иртеççĕ?

# 20

- Нарспи мĕнле-мĕнле ал ĕç тума пĕлет?

# 30

- Нарспи вӑрмана тарса кайсан мӗнле тӗлӗк курать?

40

- Хӗр туйӗнче камсем тата мӗнле музыка инструменчӗпе каласа ташлаççӗ?

50

- К.В.Иванов „Нарспи" поэмăра чăваш мифологийĕнчи мĕнле ыр-хаяр сăнарĕсемпе усă курать?

# II раунд

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Нарспи” поэмăри халăх сăмахлăхĕ | 100 | 200 | 300 | 400 | 500 |
| Нарспи” поэмăри илемлĕх мелĕсем | 100 | 200 | 300 | 400 | 500 |
| Çеçпĕл Мишшин сăвă виçисем | 100 | 200 | 300 | 400 | 500 |
| Çеçпĕл Мишши поэзийĕ | 100 | 200 | 300 | 400 | 500 |
| Константин Иванов хайлавĕсем | 100 | 200 | 300 | 400 | 500 |

# 100

- Телейсёр самант!!!



# 200

- Çак йĕркесенче халăх сăмахлăхĕн хăш жанрĕпе усă курнă?

  Сÿс хÿрелле хурçă йытă

  Пĕр кĕрет те пĕр тухать.

# 300

- Çак йĕркесенче халăх сăмахлăхĕн хăш жанрĕпе усă курнă?

  Мĕншĕн шăппăн ларатăр,<br>
  Мĕншĕн шăппăн ларатăр?<br>
  Шăппăн-шăппăн лармашкăн<br>
  Шăпчăк чĕппи мар эпир.

# 400

- Çак йĕркесенче халăх сăмахлăхĕн хăш жанрĕпе усă курнă?

  Пĕтĕр, типĕр çакăнта,

  Типĕ хăрăк турат пек!

  Шăммăр-шаккăр çĕриччен

  Асапланăр йытă пек!

# 500

- Çак йĕркесенче халăх сăмахлăхĕн хăш жанрĕпе усă курнă?

  Е сак çинчи кушакĕ

  Питне çăва пуçласан

  Апат хатĕр хăнашăн…

# 100

- Çак йĕркесенче поэт мĕнле илемлĕх мелĕпе усă курнă?

  Нар пек хитре хĕрĕсем

  Акăшсем пек утаççĕ.

# 200

- Çак йĕркесенче поэт мĕнле илемлĕх мелĕпе усă курнă?

  Сивĕ, хаяр хĕл иртет,

  Каять йĕрсе, хурланса.

## 300

- Çак йĕркесенче поэт мĕнле илемлĕх мелĕпе усă курнă?

  Хĕл куççулĕ шавласа

  Юхса кайрĕ çырмара.

# 400

- Çак йĕркесенче поэт мĕнле илемлĕх мелĕпе усă курнă?

  Аçа çапать, шартлататать,

  Пĕтĕм тĕнче кисренет.

# 500

- Çак йĕркесенче поэт мĕнле илемлĕх мелĕпе усă курнă?

  Хирти ака айĕнче
  Çерем лап-лап касăлать.
  Усал хуйхă-суйхăран
  Нарспи чунĕ касăлать.

**100**

# Телейлĕ самант!!!



# 200 «Михĕри кушак



Çакăнти йĕркесене мĕнле виçепе сырнă?

Катаран каç килсен, каçхи кунăн мĕлки

Уйсене ыйхăпа хупласан…

# 300

- Çакăнти йĕркесене мĕнле виçепе çырнă?

  Инçе çинçе уйра уяр

  Карталанса чăлтăртатать

  Енчен енне çупса чупать.

# 400

- Çакăнти йĕркесене мĕнле виçепе çырнă?

  Вĕçсĕр-хĕрсĕр тинĕсĕм,

  Хуп-хуран, сип-симĕссĕн.

# 500

- Çакăнти йĕркесене мĕнле виçепе çырнă?

  Çĕршывăм хăюллăн вăранĕ,

  Тапранĕ кăвар кайăкла.

# 100

- Çак йĕркесене поэтăн хăш сăввисенчен илнĕ?

Ман çунатлă вутлă чунăм,
Çĕн çĕре чĕнен чĕре
Кĕрешӳ вăйне анчах
Кăмăллать çак тĕнчере.

# 200

- Çак йĕркесене поэтăн хăш сăввисенчен илнĕ?

  Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,

  Çĕр-шывăн хастар ачисем.

  Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр,

  Ан юлăр кун-çул уттинчен.

# 300«Михӗри кушак»



- Ҫак йӗркесене поэтӑн хӑш сӑввисенчен илнӗ?

  Ҫӗн Кун аки пуҫӗн хӗп-хӗрлӗ тимӗрри

  Касса-касса уй урлӑ кас тӑвать.

  Кас-кас айне чӑвашӑн иртнӗ ӗмӗрри

  Вилсе выртса пытарӑнса пырать.

# 400

- Çак йĕркесене поэтăн хăш сăввисенчен илнĕ?

Тĕнчене тасатрĕ ирĕк вут кăварĕ,
Çут тĕнче çуталчĕ, иртрĕ авалхи.
Тĕттĕмĕ тĕп пулчĕ, мăшкăл иртсе кайрĕ –
Тин ирĕке тухрăн, тĕп чăваш чĕлхи!

# 500

- Çак йĕркесене поэтăн хăш сăввисенчен илнĕ?

  Ĕлĕкхи ĕмĕрсен ĕмĕлки хушшинче
  Чăваш çĕрĕ мана курăнать.
  Ман çĕр-шыв хĕрлĕ юнлă хĕрес
çумĕнче
  Çакăнса, çыхăнса тăраять.

# 100

- Çак йĕркесене поэтăн хăш хайлавĕнчен илнĕ?

  Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм,
  Хирти сарă чечек пек.
  Икĕ куçĕ хуп-хура,
  Икĕ хура шăрçа пек.

# 200

- Çак йĕркесене поэтăн хăш хайлавĕнчен илнĕ?

Шалт-шалт тыллăм, шалт тыллăм!
Акăр çулĕпе сик, тыллăм,
Çав кин патне çит, тыллăм,
Çав кин пуçне çи, тыллăм!

# 300

- Çак йӗркесене поэтӑн хӑш хайлавӗнчен илнӗ?

  Хӑйӗн аслӑ хӗрӗнчен
  Ашшӗ ыйтать: „Мӗн мӑнтӑр?"
  -Пирӗн атте килӗнчи
  Кӑвак лаша пит мӑнтӑр".

# 400

- Çак йĕркесене поэтăн хăш хайлавĕнчен илнĕ?

  Ячĕ унăн Чĕкеçчĕ,

  Хăй те чĕкеç пекехчĕ,

  Ытарма çук аванччĕ,

  Алли çăмăл ĕç тума,

  Тути çӳхе чуптума.

# 500

- Çак йĕркесене поэтăн хăш хайлавĕнчен илнĕ?

  Шăнтать ĕнтĕ кунсерен,
  Çитрĕ ĕнтĕ кĕркунне.
  Вĕçен кайăк сассинчен
  Хуйхă кĕрет чĕрене.

# «Хамăр вăйă»

| |
|---|
| Культура диалогĕ ? |
| Театр ӳнерĕ? |
| |

# Культура диалогĕ

- Çеçпĕл Мишшин поэзийĕ урăх халăх хăш сăвăçисен пултарулăхĕпе пĕр кĕвĕллĕ пулнă?

# Театр ӳнерӗ

- Чăваш патшалăх драма театрӗнчи хăш артистка нумай çул хушши Нарспи рольне вылянă?